*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

83 (2495) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕ КУН

2014, юпа, 24

ЧĂВАШ ЕН | ЯЛ-ЙЫШ | КИЛ | ХŬТЛĔХ | СЫВЛĂХ | ТĔПЕЛ

## «Инкекре пăрахмастпăр»

Эрне каялла пăрлă çумăрпа йĕпе юр çуса йывăççене, электролинине пăрлантарчĕ. Йывăрăша чăтаймасăр йывăççем хуçăла-хуçăла анчĕç, çутă юписем тӳнчĕç, пралуксем таталчĕç. Уйрăмах Муркаш, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Куславкка, Красноармейски, Етĕрне, Шупашкар, Вăрмар, Çĕрпӳ, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле районĕсем шар курчĕç. Ялсем, шкулсем, ача сачĕсем, фермăсем, фельдшерпа акушер пункчĕсем, çуртсем çутăсăр тăрса юлчĕç. Республикăра чрезвычайлă лару-тăру йĕркеленчĕ. ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çут çанталăк синкерне тĕппипе сирмесĕр те, юлашки киле çутă çитермесĕр те чрезвычайлă лару-тăру режимне пăрахăçламасса пĕлтерчĕ.

Инкеке сирме республикăра вун-вун бригада йĕркеленĕ, унсăр пуçне çут çанталăк синкерне сирме Саратов, Самар, Киров, Чул хула, Оренбург, Ульяновск облаçĕсенчен, Мордва Республикинчен килсе çитнĕ ушкăнсем те пулăшаççĕ. Чылай çĕрте учреждениесене, фермăсене генераторсем вырнаçтарнă.

Муркаш районĕ чи пысăк шар тӳснĕ район. Электроэнергипе усă курайманнисен йышĕн çурри шăпах çак районта. Пăрлă çумăр тата йĕпе юр çунă кунсенче унта 63 çутă юпи сиенленнĕ. Шупашкар районĕнче те электропередача линийĕ таталнипе нумай ял çутăсăр ларнă. Юпа уйăхĕн 21-мĕшĕ тĕлне 6 районта юсав ĕçĕсене вĕçлеме май килнĕ. 80 ял-поселока электроэнергипе тивĕçтернĕ. Чрезвычайлă лару-тăру режимне ĕçе кĕртнĕренпе вара пĕтĕмпе 360 ял-поселока электроэнерги панă, вĕсенче 30852 çурт, 74650 çын пурăнать.

Ĕнерхи кун тĕлне Шупашкар, Элĕк, Етĕрне районĕсене çутăпа тивĕçтернĕ.

«Эпир халăха инкекре нихăçан та пăрахман, малашне те пăрахмăпăр, пулăшăпăр», – тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ. Вăл çут çанталăк синкерне сирес тĕлĕшпе пĕтĕм шайри влаç органĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçленине, энергипе тивĕçтермелли урăх çăл куççемпе тата пурлăх резервĕсемпе усă курнине палăртнă. Çавăн пекех Раççей Правительствинчен тăкаксене саплаштармашкăн резерв фондĕнчен 75 млн тенкĕ уйăрма ыйтса çырнине пĕлтернĕ.

Ĕнер Правительство çуртĕнче иртнĕ видеоконференцире çутăсăр тата ăшăсăр виçĕ район – Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ – юлнине палăртнă. Энергетиксем каç енне пур киле те çутă çитерме шантарнă.

## КĔСКЕН

**Вырсарни кун, юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче, хĕллехи вăхăта куçатпăр. Çурçĕр иртни 2 сехетре сехет йĕппине 1 сехет каялла куçармалла.**

**Юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕсен кунне паллă тăваççĕ.**



**ПАЯН** кун тăршшĕ 9 сехет те 48 минут. Çĕнĕ уйăх (1.55).

Хĕлип кунĕ. Нӳрлĕ çĕр çине ӳкнĕ юр ирĕлмесен çуркунне тыр-пул аван пулĕ тенĕ. Килти кайăк-кĕшĕк пуçне çунатти айне пытарни – сивĕтессе.

**ЫРАН** – çăлтăр шутлакан Андрон кунĕ. Каçхи тӳпене сăнанă: тӳпере çăлтăр нумай пулни – çитес çул пăрçа ăнса пуласса. Çăлтăрсем çап-çуттăн йăлтăртатни – сивĕтессе, вăйсăррăн çунни - ăшăтасса, мĕлтлетни – çанталăк улшăнасса.

**ВИÇМИНЕ** – Турă амăшĕн Иверинчи турăшĕн кунĕ. Тĕрлĕ чир-чĕртен, инкекрен, пушартан хăтарма, çĕр пулăхне ӳстерме ыйтса кĕлтунă.

## ЫЙТУ-ХУРАВ

### Улмуççисем авăнчĕç

**? Сад пахчинчи йывăççем шăкăрин пăр ăшĕнче ларнине хам ĕмĕрте пуçласа куртăм. Çулçине тăкса ĕлкĕреймен улмуççисем йывăрпа авăна-авăна ларнă, хăшĕ-пĕри хуçăлнă та. Чиесем те йывăрăшне чăтаймасăр çĕр çумне тĕршĕннĕ. Нуша куракан йывăççене пăр ăшĕнчен кăларас тесе çур кун ытла шаккаса çӳрерĕм. Катрамĕ-катрамĕпе пăр тăкăнчĕ. Халĕ вара тĕрĕсех турăм-ши тесе пуçа вататăп. Йывăççене шаккаса пушшех сиенлемерĕм-ши?**

**Светлана НИКОЛАЕВА. Шупашкар районĕ, Вăрманкас.**

Сирĕн ыйтăвăра çут çанталăк министерствин специалисчĕ **Галина Павловна КУЗНЕЦОВА** хуравлать:

– Йывăççене йывăр çăкран хăтарса тĕрĕсех тунă эсир. Улмуççисене шаккама пуçличчен патака çемçе пусма таткипе авăрланине те шанас килет. Йывăççем çак кунсенче питĕ пысăк стресс тӳсрĕç. Çын ӳксе ал-урине амантсан е хуçсан еплерех нушаланать – суранланнă йывăç та çаплах шар курать. Çанталăк кăшт ăшăтсанах хуçăлнă вырăнсене тирпейлĕн касса сад маçĕпе е замазкăпа сĕрме сĕнес килет. Улмуççисене чăннипех те шеллетĕр пулсан, çуркунне чечекĕсене татса пăрахăр. Çимĕç туса пур-çук вăйне ан пĕтертĕр. Йывăçа вăй илме вăхăт кирлĕ.

### Çуркуннеччен кĕтмелле

**? Йывăç турачĕсене кĕркунне е çуркунне кассан лайăхрах-ши? Хĕле хирĕç касса тирпей-илем кĕртме кирлех-ши вĕсене?**

Улма-çырла йывăççисен турачĕсене кĕркунне касса кĕскетме сĕнмеççĕ. Мĕншĕн тесен эпир хĕл мĕнле пуласса пĕлместпĕр-çке. Шартлама сивĕ пулсан каснă вырăн шăнать. Апла çĕрĕк чирĕ пуçланас хăрушлăх пур, йывăç кӳлепи кирлĕ пек йĕркеленеймессе те пултарать. Пирĕн тăрăхра йывăçа çуркунне кăна касса кĕскетнине нимĕн те çитмест-тĕр. Анчах ку çырла тĕмĕсене (хурлăхан, крыжовник, хура пилеш тата ыттисене те) тирпейлемелле мар тенине пĕлтермест. Ватăлса çитнĕ тата чирлĕ туратсене касмалла.

### Хуппи çуркаланать

**? 3-4 çул каялла лартнă улмуççипе груша вуллисен хуппи темшĕн çуркаланать. Мĕн тумалла-ши?**

Ахăртнех азот удобренийĕ нумай хывнă. Кун пек чухне улма-çырла йывăççĕ питĕ хăвăрт ӳснипе хуппи ĕлкĕрсе пыраймасть. Çавна май вулă çинче çуркаланнă тăрăхла йĕрсем пулаççĕ. Вĕсене çĕçĕпе тасатса сад маçĕпе сĕрмелле. Йывăçа вăхăтлăха апатлантарма пăрахмалла, çулла сахалтарах шăвармалла.

## СĔНӲ-КАНАШ

✓ Упрама хунă çĕр улмине пурăпа (мел), «сӳнтернĕ» типĕ извеçпе е алланă йывăç кĕлĕпе сапсан чир-чĕр çулăхмĕ. Çĕр улмине симĕс пилеш çулçипе, типĕтнĕ эрĕмпе е сертепе хутăш хуни çĕресрен хӳтĕлĕ.

✓ Чăхсене хăйсен çӳллĕшĕнчен кăшт çӳлерех милĕк е купăста пуçĕ çакса памалла. Ăна таккасишĕн вĕсен тăтăшах хускалма, сиккелеме тивет. Çăмарта тăвакан чăхшăн ку чи кирли. Капла вĕсем шăнмĕç.

## ПАХЧАÇĂ – ПАХЧАÇА

### Йывăççене хӳтĕлеме

Çамрăк йывăççене хĕлле шăшипе куян кăшласран темиçе çул ĕнтĕ капрон чăлхапа тата колготкипе усă куратăп. Йывăçăн вуллипе тĕп турачĕсене унпа çыхатăп. Капрон колготкине икĕ пая пайласа йывăç вуллине аялтанах çыхса хăпаратăп, сӳтĕлсе каясран çиелтен шпагатпа çыхатăп. Унтан вулă тавра 5-7 см çӳллĕш çĕрпе хуплатăп. Çулсеренех çапла 7-8 улмуççи çыхатăп. 8-10 çул ӳснĕ улмуççине çыхма виçĕ вăрăм чăлха е икĕ колготки каять. Çуркунне вĕсене каялла салтса тепĕр çул валли пуçтарса хуратăп. Çапла майпа вунă çула яхăнах усă куратăп вĕсемпе. Ку таранччен пĕр йывăçа та шăши кăшламан.

Вăрман çывăхĕнче пурăнакансене кулянсенчен сыхланса чăлха çийĕн икĕ литрлă пластик бутылка тăхăнтартма сĕнес килет. Малтан бутылкăн аялти тата çӳлти пайне касмалла, унтан – тăршшĕн. Кашнине пĕр-пĕрин çине тăхăнтарса пымалла, шпагатпа çыхмалла. Пĕр йывăçа 5-6 бутылка каять.

**Юрий ИВАНОВ.**

### Шăши иленсен

Консерв банки ăшне хутпа çăм татăкĕ (сурăх е йытă çăмĕнчен çыхнă алсапа нуски те юрать) чиксе шăрпăкпа чĕртмелле. Çăм çунма пуçласанах банка хуппине, темиçе çĕртен шăтарнăскере, хупмалла. Банкăна сарайне, нӳхрепе, гаража лартса алăка тачă хупмалла. Шăшипе йĕкехӳре тавраш çунăк шăршине чăтма пултараймасть. Çапла кашни икĕ-виçĕ уйăхра туса тăмалла.

Вăрçă вăхăтĕнче усă курнă меслет те пулăшма пултарать: пĕтнĕк (мята перечная) çăвĕне йĕпетнĕ пусма таткине шăшисем çӳрекен вырăна е шăтăкне хумалла. Çавăн пекех вĕсене упа паланĕн (бузина) шăрши те килĕшмест, çавăнпа унăн турачĕсене пăрахса тухмалла.

## ÇЫРĂНТАРУ – 2015

**Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил. Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм, Васка, çырăнса ил!**

**Хресчен сасси – 376 тенкĕ те 62 пус.**
Индексĕ – 54838

**Хресчен сасси-Кил – 184 тенкĕ те 08 пус.**
Индексĕ – 43887

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 24.10 | 25.10 | 26.10 | 27.10 | 28.10 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2-4 сехетре | –14 | –16 | –12 | –11 | –2 |
| | 14-16 сехетре | –8 | –9 | –7 | +1 | +2 |
| Çумăр çăвать | | – | – | – | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 759 | 762 | 767 | 762 | 747 |

КĔСКЕН

**Раççей Ĕç министерствин кăтартăвĕсем тăрăх – пирĕн çĕршывра пурăнакан 33,1 млн çын ĕçлеме пултаракан вăй питти çулран иртнĕ. Урăхла каласан, кашни тăваттăмĕшĕ – пенсионер. Халăхăн 23,1 проценчĕ ку. 2016 çул тĕлне пенсионерсен йышĕ 36 млн çитессе палăртаççĕ. Чăваш Республикинче хальхи вăхăтра 353 пин пенсионер пурăнать.**

ХӲТЛĔХ

# Амăшĕн укçи

– Амăшĕн капиталĕпе хăçанччен усă курма май пур? – кăсăкланать хăш-пĕр вулакан.

– Амăшĕн укçипе усă курмалли вăхăта чикĕлемен, – тесе пĕлтерет РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕ. 2016 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачана çуратса ĕлкĕрнĕ е усрава илнĕ çемье амăшĕн капиталĕн сертификачĕпе кирек хăçан та усă курма пултарать. Паянхи куна республикăра 55,3 пин çемье капитал сертификатне тивĕçнĕ. Çемьесенчен çурри ытларахăшĕ (33,6 пин заявлени йышăннă) укçапа усă курнă та ĕнтĕ. Ытларахăшĕ унпа пурăнмалли условисене лайăхлатнă. Ипотека кредитне саплаштарма, çурт тума е туянма пĕтĕмпе 11 млрд тенкĕ куçарнă.

Аслă ачисене вузра е колледжра вĕренме, общежитире пурăнма, ачана садике çӳретнĕшĕн тӳлеме амăшĕн капиталĕн шутĕнчен 32 млн тенкĕ кайнă.

Капитал укçипе амăшĕн пухăнакан пенсине ӳстерме хальлĕхе пĕр çын та заявлени çырман. Амăшĕн капиталĕ çинчен федерации саккунĕ вăя кĕнĕренпе 8 çул çитрĕ. Çак тапхăрта капитал укçи 250 пин тенкĕрен 429 пин тенкĕ таран ӳсрĕ.

СИППЕ КАЙТĂР

# Миома пулсан

**АМАЛĂХ МИОМИНЕ СИПЛЕМЕЛЛИ РЕЦЕПТСЕМ:**

1) Çул литр шур эрехе 50 г чухлĕ боровая матка текен вĕтетнĕ курăка ямалла. Пĕр уйăха яхăн ăна тĕттĕм вырăнта тăрăлтарса лартмалла. Настойкăна кунне 3 хут пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле. Çак хатĕр ыратнине иртерет, миома ӳсме пăрахать, шыçă хăй тĕллĕнех пĕтме пултарать.

2) Шурă сухан касăкне теркăпа хырмалла, унтан бинтпа чĕркесе каçлăха амалăх умне чикмелле. Çапла шыçă чакса пырса пĕтĕмпех çухаличчен. 4 уйăхран кая мар сиплемелле.

3) Прополисран пысăкăш мар çурта туса çывăрас умĕн амалăх умне чикмелле. 10 кун сиплемелле, 5 кун канмалла. Сывалса çитиччен.

4) 100 мл спирта 40 аçтăрхан мăйăрĕн (грецкий орех) çурхахне ярса тăрălса çитиччен лартмалла. Кунне 3 хут 15-шер тумлам ĕçмелле. Сиплев тапхăрĕ – 2 уйăх.

5) Аш арманĕ витĕр кăларнă 400 г чухлĕ алоэ çулçи çине 650 мл пыл тата пĕр бутылка «кагор» эрех хушмалла. Пурне те пĕрле пăтратса тĕттĕм вырăна пĕр эрнелĕхе лартмалла. Настойкăна апат умĕн пĕрер кашăк ĕçмелле.

6) Хупах çулçипе тымарĕнчен хатĕрленĕ настой та аван. Тин вĕретнĕ 2 стакан шыва порошок пек пуличчен вĕтетнĕ хупах ярса тĕттĕм вырăнта 12 сехет тăрăлтарса лартмалла. Апат умĕн çуршар стакан ĕçмелле.

7) Çур литр шур эрехе 10-15 симĕс аçтăрхан мăйăрĕ ярса тĕттĕм вырăнта 35 кун лартмалла, сăрăхтармалла. Кунне 3 хут, апат умĕн çур сехет маларах, пĕрер кашăк ĕçмелле. Сиплев тапхăрĕ – 7 кун, унтан 1 эрне канмалла та каллех сиплемелле. Çак хатĕр миомăран кăна мар, кирек епле шыçă чирĕнчен те аван.

ВУЛАКАН СĔНЕТ



# Шур çырли – хĕрарăм çырли

Шăк хăмпи шыççи (цистит) мĕнлерех нушалантарнине çав инкеке тӳссе курни çеç ăнланать пулĕ. Кăшт шăнсанах чир тепĕр хут таврăнать.

Чирпе халтан кайнă хыççăн пĕр лайăх тухтăр патне лекрĕм. Питĕ ыратнине эмелсемпе иртерни хыççăн вăл шур çырлипе сиплеме сĕнчĕ. Рецепчĕ çапла:

1 стакан чухлĕ çырла çумалла, блендера ярса çавăрттармалла. Эрне сиплемелĕх çăра хутăш пулĕ. Ăна холодильникра упрамалла. Ирпе-каçпа пĕр стакан ăшă шыва 1 чей кашăкĕ ярса ĕçмелле. Шур çырли шăк хăваланине шута илмелле, çавăнпа ăна çула тухас умĕн ĕçмелле мар.

Çырла уссине эрнеренех туйма пуçлатăр. Халĕ те, кăшт шăнсанах, шăнтса хунă çырлана туртса кăларатăп. Вăл манăн пĕрремĕш пулăшакан.

**Анна Сергеевна.**

***Сиплемелли курăка çĕнĕ уйăхпа хатĕрлемелле, тымара – тулли уйăхпа. Сиплеме вара уйăх катăлма пуçласан тытăнмалла.***

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

ШУТА ИЛМЕ

# Юн пусăмĕ ӳссен

***Гипертони – анлă сарăлнă чирсенчен пĕри. Ун çинчен пĕтĕмпех пĕлнĕн туйăнсан та ыйтусем тупăнсах тăраççĕ. Часчасах тĕл пулакан ыйтусем çине Дмитрий Даренский хуравлать.***

**1 Юн пусăмĕ ӳснипе ватă çынсем кăна аптраççĕ тени тĕрĕс-и?**

Тĕрĕс мар. Юн пусăмĕ ӳснипе нушаланакансен йышĕ çулсерен çамрăкланса пырать. Хальхи вăхăтра 20-30 çултисен хушшинче те час-часах гипертониксем тĕл пулаççĕ. Çавăнпа кашни çыннăн хăйĕн юн пусăмне тĕрĕслесех тăмалла.

**2 Йăхра çак чирпе чирлекенсем пурри тата тăтăшах стресс тӳсни чире малалла аталантарма май парать-и?**

Çемьере кам та пулин гипертоник пулни эсир те çав чирпе чирлессе пĕлтермест. Анчах йăхра пурри çумне ытти лайăх мар енсем хушăнсан (калăпăр, эрех-сăрапа иртĕхни, табак туртни, тăварлă çиме юратни) хайхи «усал» чăннипех те çыпăçма пултарать. Тăтăшах стресс тӳсни, холестерин шайĕ ӳсни, мăнтăрланни – гипертони пуçланас хăрушлăха ӳстереççĕ.

**3 Юн пусăмĕ пĕр-икĕ хут хăпарнипех «гипертони» теме пулать-и?**

Юн пусăмне пĕрре виçнипех ку диагноза лартмаççĕ. Ăна врач лартать: сахалтан та хăй патĕнче виçĕ хут пулса виçнĕ хыççăн. Кăтарту кашнинчех расна пулсан çын çумне ятарлă прибор вырнаçтараççĕ. Вăл юн пусăмĕ талăкра мĕнле улшăннине палăртать.

**4 Çын хăйĕн юн пусăмĕ пысăк пулнине туймасан та пултарать-и?**

Пултарать. Чылай чухне çынсем темиçе çул таран хăйсен юн пусăмĕ хăпарнине сисмесĕрех пурăнаççĕ. Чир çапла майпа вăрттăн аталанни пысăк хăрушлăх кăларса тăратать.

Çапах та юн пусăмĕ ӳснине пач сисмесĕр май çук. Хăшĕсен пуç ыратать. Ытларах чухне ĕнсе тĕлĕнче. Кашни çемьерех тонометр пулмалла. Хăвăра япăх туйнă чухне кирек хăш вăхăтра виçме май пултăр.

**5 Гипертони чирне пуçламăш тапхăрта асăрхаса малалла аталанасран чарма пулать-и?**

Чи пуçламăш тапхăрта асăрхасан çеç. Анчах чире пуçламăш тапхăрта палăртма питĕ йывăр. Çын хăйне япăх туйнине ывăннипе çеç сыхăнтарать, çав вăхăтра чир шала каять те.

Çапах çынран хăйĕнчен те нумай килет: тăтăшах хускану тумалла, табак туртмалла мар, самăрăлса каясран асăрханмалла.

**6 Гипертониксене пӳрене тĕрĕслеттермеллине аса илтересех тăраççĕ. Мĕншĕн?**

Юн пусăмĕ ӳссе кайсан чĕре кăна мар, пӳре те, пуç мими те, юн тымарĕсем те шар кураççĕ. Вĕсем мĕн таран сиенленнине ятарлă тĕрĕслевсĕр те палăртма май çук. Çавăнпа тĕрĕслеме сĕнеççĕ те ĕнтĕ.

КИРЛĔ ПУЛĔ

# Эмелсĕрех чакарар

**Шăнса пăсăлнă, пĕтĕм шăмшак ыратать, ӳт температури 38 градусран та иртнĕ, ал айĕнче вара ăна чакармалли эмел те çук. Мĕн тумалла? Лăпланмалла. Хăраса ан ӳкĕр. Мĕн кирли сирĕн алă айĕнчех.**

**Сăтăрăнмалла**

Пĕр тан виçепе вĕретсе сивĕтнĕ шыв тата шур эрех илсе хутăштармалла. Пир пусмана унпа йĕпетсе пĕтĕм ӳт-пĕве сăтăрса вырăн çине выртмалла. Çапла кашни сехетрен туса тăмалла – температура чакиччен.

Тин вĕретнĕ çур литр шыва 2-шер апат кашăкĕ пĕтнĕкпе (мята) пыл курăкĕ (мелисса) ярса пăтратмалла, лĕп çеç юличчен кĕтмелле, сăрăхтармалла. Марльăна унпа йĕпетсе ӳт-пĕве сăтăрмалла. Унтан лайăх чĕркенсе выртмалла. Çапла кашни сехетре туса тăмалла.

**Çĕр улми компресĕ**

Çĕр улмине шултра теркăпа хырмалла, 1 чей кашăкĕ апат уксусĕ хушса пăтратмалла. Хутăша марльăпа чĕркесе çамка çине хумалла. Компреса 15-20 минут майлă тытмалла, унтан ун вырăнне çĕнни хатĕрлемелле.

**Тăварланă хăярпа**

Тăварланă хăяра тăршшĕн касса ура тĕпĕпе çамка çине, ĕнсе хыçне хумалла. Хăярĕ типнĕçемĕн ăна урăххипе улăштармалла. Температура чакиччен тытмалла.

**Хăмла çырли çулçипе**



Пĕрер кашăк вĕтетнĕ хăмла çырли çулçипе хура чей илсе хутăштармалла. Ун çине тин вĕретнĕ 1 стакан шыв ярса 10-15 минут лартмалла, сăрăхтармалла. 2 кашăк шур эрех хушмалла. Кунне 2-3 хут çуршар стакан ĕçмелле. Чĕркенсе вырăн çине выртмалла.

Йĕп-йĕпе тара ӳксен тумтире типпипе улăштармалла.

**Суханпа пан улми хутăшĕ**

Вăтам суханпа пан улми теркăламалла, çавăн чухлех илнĕ пыл хушмалла. Хутăша кунне 3 хут, апат умĕн, пĕрер кашăк çимелле.

РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**6. Навоз, торф, чернозем, бой** кирпича, песок, гравмассу с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**11. Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозем.** Дешево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 8-927-861-75-89, 8-937-381-05-85.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**20. Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы, **кровля, обшивка** домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74. metalservis21.ru

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Дёшево. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**23. Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Доставка. Тел. 89061355241.

**33. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 89373866629.**

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53. ОТРУБИ, ЗЕРНО, К/КОРМ.** Д-ка. Т. 89613412236.

**58. Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит, чернозем.** Д-ка. Т. 89276687015.

**77. ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХŬТЛĔХ СЫВЛĂХ
ТĔПЕЛ

## КĔСКЕН

Çак кунсенче Чăваш кĕнеке издательствинче ял хуçалăхĕн паллă ĕçченĕсене халаллана кĕнеке кун çути курчĕ. «Работники сельского хозяйства» ятпа тухнăскере ял хуçалăх производствин паллă ĕçченĕсем çинчен çырнă 32 очерк кĕнĕ. Паллă ятсем хушшинче С.К. Коротков, И.Ф.Кошкин, В.И.Романов, М.Г.Долгов, В.А.Никитин, А.П.Айдак, С.Л.Лукин, А.Г.Шордеев, А.Д.Смалайкин, В.В.Зайцев, Е.А.Беликова, К.В.Петрова тата ыттисем те.

Республикăн вĕренӳ тытăмĕнче 1082 организаци, вĕсенче 20 пине яхăн вĕрентекен ĕçлет. Çак пысăк ушкăнра чи çамрăккисем – кăçал пуçласа ачасем умне тăракансем – 137-ĕн. 35 çула çитмен педагогсем вара мĕн пур йышăн 15 процентне кăна.

## САЛАМЛАТПĂР!

Хаклăран та хаклă аннене, кукамая, юратнă инкене – Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкре пурăнакан **Александра Андреевна ВАСТУЛОВĂНА** – юбилей ячĕпе чунран саламлатпăр, çирĕп сывлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Санăн ырă кăмăлу, тараватлăху яланхи пекех пире нумай-нумай çул савăнтарса тăччăр.



**Ачисем, мăнукĕсем, тăванĕсем, Вастуловсем, Архиповсем, Федоровсем.**

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Хутламлă çĕр улми

**8-10 пысăкăш мар çĕр улми, 200 г салă, кăшт тип çу, 100 г майонез, ешĕл çимĕç, 2 шăл ыхра, тăварпа пăрăç.**

Çĕр улмине щеткăпа лайăх çумалла, салфеткăпа типĕтмелле. Унтан паранка 3 мм хулăнăш хутламсем туса касмалла. Кашăк çине хурса кассан лайăххах, пĕтĕмпех касăлса ӳкмĕ. Пулнă хушăксене салă касăкĕ хумалла. Хатĕрленĕ çĕр улмине тип çу сĕрнĕ противень çине хумалла, тăвар калаттармалла, духовкăра пĕçермелле. Кăмăл пулсан кашни çĕр улмине ыхрапа петрушка хушнă майонез хутăшĕпе сĕрмелле. Чĕлхене çăтса ямалла тутлă пулĕ.

### Пан улми кукăлĕ

Чуста валли: 300 г çăнăх, 150 г морозильника хурса шăнтнă услам çу, 90 г сип сивĕ шыв.

**Ăшлăх валли: 6-7 пан улми, 200 г сахăр, 40 г çăнăх, 1 чей кашăкĕ корица, çур лимон сĕткенĕ, кукăль питне сĕрме 1 çăмарта.**

Сивĕ çăва теркăпа хырса çăнăхпа хутăштармалла. Сивĕ шыв хушса чуста çăрмалла. Чуста чăмаккине апат-çимĕç пленкипе чĕркесе 20 минутлăха холодильника хумалла. Унтан чустана 2 пая пайламалла. Пĕр пайне 3-4 мм хулăнăш сарса формăна хумалла.

Ăшлăх хатĕрлемелле: пан улмине тăватăлласа турамалла, лимон сĕткенĕпе пĕрĕхтермелле. Уйрăм савăтра сахăр, çăнăх, корица хутăштармалла та ăна пан улмипе пĕрлештермелле.

Ăшлăха чуста çине хурса тикĕслемелле, чустан иккĕмĕш пайĕпе витсе хĕррисене «çĕлесе» тухмалла. Варрине пысăках мар шăтăк тумалла. Кукăле хур тĕкĕпе е кисточкăпе усă курса лăканă çăмартапа сĕрмелле.

220 градус таран хĕртнĕ духовкăра 15 минута яхăн пĕçермелле, унтан 180 градус çине лартса тата 40-45 минут тытмалла.

### Кĕрпе яшки

**Урпа кĕрпи, çĕр улми, кишĕр, пуçлă сухан, чăх какайĕ.**

Чăх шӳрпи пĕçермелле. Унта урпа кĕрпи хушмалла. Вĕреме кĕрсен туранă çĕр улми ямалла. Юлашкинчен суханпа кишĕр ăшаласа ямалла.

## КИЛ-ТĔРĔШРЕ



### Çĕнĕ çатма

Вĕр çĕнĕ çатма туянсан ăна малтан пусма таткипе шăлса тасатмалла. Унтан хуçалăх супăнĕ ирĕлтернĕ вĕри шывпа çумалла. Кайран йăваш çулăм çинче 2 сехете яхăн хĕртмелле – машина çăвĕн шăрши çухалĕ. Çакăн хыççăн çатма сивĕнессе кĕтмелле, тепĕр хут тăварпа, ăшă шывпа çумалла.

Çаксене тунă хыççăн тип çупа сĕрнĕ çатмана çур сехет майлă çулăм çинче хĕртмелле. Тутăх ересрен, апат-çимĕç çатма тĕпне ларасран хӳтĕлекен хăйне евĕр сий пулать.

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

### Вăхăт кĕтмест

Ан тух нихăçан урама
Хăвăн телейне шырама.
Тенчере этем шăпине
Çырнă курăнман хут çине.
Телей вăл – ĕмĕтри яланах,
Питĕ йывăр тупмашкăн ăна.
Пăрăнсан çултан айккине
Çухататăн пур пек телейне.
Ачалăх чипер ирттĕр ялан
Вара аса илĕн ăна кăмăлтан.
Вăхăт кĕтмест, сывлăм типет –
Выляс-куласси те çапла вăл иртет.
Пулĕç умра çĕнĕ кунсем,
Йышăн чунтан: санăн вĕсем.
Сисмĕн те эсĕ, урусем çине
Пурнăçра пусать хура ĕне.

**Иван ЕРОФЕЕВ. Патăрьел районĕ, Ишлĕ ялĕ.**

## ЧИПЕРЛЕНЕР-И?

Пит вистеннинчен хăтăлма тата сăна илемлетме çакнашкал маска пулăшĕ: 1 кашăк кефир, 1 чей кашăкĕ пыл, 1 чей кашăкĕ сĕлĕ çăнăхĕ тата чĕптĕм тăвар илмелле. Пурне те пĕрле лайăх пăтратса питпе мăй çине сĕрмелле, 20 минутран ăшă шывпа çуса ямалла. Ӳт вистенни майĕпен иртет, пите çутă та сывă сăн çапать.

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Чиркĕве кайса парăр

**?** **Висĕ çул каялла пĕр арçын Турă Амăшĕн сăнне парнелерĕ. Иртнĕ çул çав турăша чиркĕве кайса патăм. Çав çылăха мĕнле кĕл туса каçарттармалла? Çавăн пекех манăн святойсен сăнĕсене ӳкернĕ алла çыхмалли сулă пур. Хам тăхăнмастăп, чиркĕве кайса пама юрать-и?**

**София Ивановна. Шупашкар.**

**Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕн настоятелĕ Игнатий атте (СУРАНОВ) хуравлать:**

– Православи тĕнĕпе сыхăннă япаласем – калăпăр, кĕнеке, турăш, хĕрес, çав шутра святойсен сăнĕсене ӳкернĕ сулă та – тĕрлĕ сăлтава пула юрăхсăра тухсан е вĕсем сире пачах та кирлĕ мар тесе шухăшлатăр пулсан çыру авторĕ тунă пек чиркĕве кайса памалла. Кунта нимĕнле çылăх та курмастăп. Çылăхĕ çав япаласемпе тĕллĕ усă курманнипе вĕсене тирпейлĕ тытманнинче. Уншăн вара чăнах та Турăран каçару ыйтмалла. Ытти çылăхшăн мĕнле ӳкĕнетпĕр çавăн пекех ӳкĕнмелле. Чиркĕве кайса Хĕреспе Евангели умĕнче священника каласа памалла.



Амарант

### Амарант çăвĕ

**?** **Амарант çăвĕ хатĕрлеме вĕрентсемĕр, тархасшăн.**

Амарант вăррине кофемолкăра вĕтетмелле. 1 стакан олива çăвĕ çине 1 стакан чухлĕ вĕтетнĕ амарант вăрри ямалла. Олива çăвĕ пулмасан рафинадламан хĕвел çаврăнăш е йĕтĕн çăвĕпе те усă курма юрать. Икĕ эрне тăрăлтарса лартмалла. Кунсерен пĕрер хут пăтратса илмелле. Банкăна капрон хупăпа хупмалла. Çутă лекмен вырăнта упрамалла. Амарант çăвĕ усал шыçă чирĕнчен сипленме пулăшнипе паллă. Ăна кунне 3 хут, апат умĕн 1 сехет маларах, 1-2 чей кашăкĕ ĕçеççĕ.

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ**

7.10-8.00 Янра, юрă! (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытлари кун, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 19.30-20.00 На Олимпе. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, юпа уйăхĕн 29-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 11.30-12.00 Çĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Экономика Чувашии. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Бумеранг. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерни кун, юпа уйăхĕн 30-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Кучченеç. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Студгородок. (12+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрне кун, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 16.10-16.30,18.10-18.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 11.30-12.00 Ӳнер тӳпинчи вĕçев. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Çĕр сум. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-16.30,17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 18.30-19.00 Пурнăç çынни. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăмат кун, чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕ**

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 9.30-10.00 Пурнăç çынни. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 10.30-11.00, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 12.00-12.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.30-16.30 Мăшăру эп сан, ай, пулам-и? (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарни кун, чӳк уйăхĕн 2-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Юрату авăрĕнче. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.30-17.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**117. ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые окна, железные двери. Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**177. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором.Т.:44-20-97, 89033582097.

**221. ПРОФНАСТИЛ,** металлочерепицу, металлосайдинг, водостоки, пластиковые окна – доставка. Замеры. **Строительство.** Т. 89196534368.

**265. Гравмассу,** песок, **щебень, бой кирпича,** асфальтную крошку, торф, чернозем, глину. Уч. ВОВ, пенсионерам – скидки. Без вых. Т. 8-919-656-77-52.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** торф, асфальтную крошку, **бетон,** раствор. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**450. Керамблоки пропаренные, вибропрессованные** – недорого. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**583. Гравмассу, песок, торф, щебень.** Т. 89050282225.

**618. Косилки,** грабли, **фрезы,** опрыскиватели, **погрузчики** на МТЗ. **ДОСТАВКА!** Тел.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

**654. Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Д-ка. Т.:36-26-23, 8-903-379-77-68.

**655. Кольца колодезные** диам. 0,7м; 1м; 1,5м. Доставка. Т.: 36-26-23, 8-903-379-77-68.

**659. ОКНА** и **ПОТОЛКИ.** Немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Д-ка, замер бесплатно. **Пенсионерам скидки.** Т. 89176627164.

### КУПЛЮ

**332. Бычков, телок, коров, свиноматок.** Т. 89279993737.

**433. Коров.** Т. 89278508564.

### РАБОТА

**703. МОНОЛИТЧИКИ в Москву.** Т.: 89661082236, 89266867321.

